42-3у

И. СТАЛИН

# ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРĔН ПРИКАЗĔ

1942 ç. майăн 1-мĕш

№ 130

*МУСКАВ хули*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*



в количестве
экземпляров
11. V 1942 г.
Подпись

И. СТАЛИН

# ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРĔН ПРИКАЗĔ

1942 ç. МАЙĂН 1-мĕш

№ 130

МУСКАВ хули

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

Отв. по выпуску **И. П. Павлов-Пинер.**
Тех. редактор **А. Т. Быков.**

Подписано к печ. 4/V 42. НТ 765. Объем 0,65 Тир. 25000 экз.

Заказ 252. Тип. №1 Управления полиграфпром.
при СНК ЧАССР.

Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем, рабочисемпе работницăсем, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсем, интеллигентла ĕçĕн çыннисем, фронтăн лешъенчи, нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнчи, вăхăтлăха нимĕç империалисчĕсен пусмăрĕ айне лекнĕ шăллăмсемпе йăмăксем!

Совет Правительстви ячĕпе тата хамăрăн большевикла парти ячĕпе сире майăн 1-мĕш кунĕнче саламласа сывлăх сунатăп!

Юлташсем! Пирĕн çĕршыври халăхсем кăçал пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен кунне—майăн 1-мĕшне—нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă обстановкăра кĕтсе илеççĕ. Вăрçă пирĕн пурнăçăн пур енĕсене те пырса тиврĕ. Вăл çавăн пекех тата паянхи куна та, майăн 1-мĕшĕнчи праздника та, пырса тиврĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, вăрçă обстановкине шута илсе, праздник ячĕпе

канма шутламарĕç,—паянхи куна хамăрăн çĕршыв оборони валли хĕрӳллĕн ĕçлесе ирттерме йышăнчĕç. Пирĕн фронтри боецсемпе пĕр пурнăçпа пурăнса, фронта ытларах пулăшу парас тата ăна винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, минометсем, танксем, самолетсем, боеприпассем, тырпул, аш-какай, пулă, пахча-çимĕç ытларах парас тесе, пирĕн ĕççыннисем майăн 1-мĕшĕнчи праздника ĕçпе кĕрешӳ кунĕ туса хучĕç.

Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: фронтпа тыл пирĕн патра—пĕрлĕхлĕ тата никам уйăрайми боевой лагерь, тăшмана çĕнтерес çул çинчи кирек мĕнле йывăрлăха та сирсе яма хатĕр тăракан лагерь пулса тăраççĕ.

Юлташсем! Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Европăна вăрçă вучахне туртса кĕнĕренпе, вĕсем Европа континентĕнчи ирĕклĕхе юратакан çĕршывсене—Франције, Норвегие, Дание, Бельгие, Голландие, Чехословакине, Польшăна, Югославине, Грецине—хăйсене пăхăнтарса, нимĕç банкирĕсене пуйтарас тĕлĕшпе вĕсен юнне ĕмме тытăннăранпа икĕ çул ытла иртрĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пирĕн çĕр-

шыв çине ирсĕррĕн те ултавлăн тапăнса пирĕн ялсемпе хуласене çаратма тата юхăнтарма, Эстонири, Латвири, Литвари, Белоруссири, Украинăри, Молдавири мирлĕ халăха ирĕксĕрлеме тата вĕлерсе пыма тытăннă вăхăтранпа вунă уйăх ытла иртрĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсем хăйсен тăван çĕршывĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне хӳтĕлесе, тискер тăшмана хирĕç отечественнăй вăрçă туса пыма тытăннăранпа вунă уйăх ытла иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче эпир нимĕç фашисчĕсене çителĕклех лайăх курса пĕлтĕмĕр, вĕсен чăн-чăн ĕмĕчĕсене ăнланса илтĕмĕр, вĕсен чăн-чăн сăн-питне курса пĕлтĕмĕр, сăмахпа каланисем тăрăх мар, вăрçă опычĕ тăрăх, пуриншĕн те паллă фактсем тăрăх курса пĕлтĕмĕр.

Камсем-ха вĕсем, пирĕн тăшмансем, нимĕç фашисчĕсем? Мĕнле çынсем-ха вĕсем? Çак тĕлĕшпе пире вăрçă опычĕ мĕн вĕрентет-ха?

Нимĕç фашисчĕсем—Германин пĕр-пĕтĕмлĕхĕпе никама пăхăнманлăхне ытти государствăсем тапăнассинчен сыхласа тăракан националистсем пулса тăраççĕ, тесе калаççĕ. Çакă вăл, паллах, суя. Норвегия, Дания, Бельгия, Голландия, Греция, Совет

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ

Союзĕ тата ирĕклĕхе юратакан ытти çĕр-шывсем Германин пĕр-пĕтĕмлĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ çине тапăннă тесе çирĕплетсе калама ултавçăсем çеç пултараççĕ. Чăннипе илсен, нимĕç фашисчĕсем националистсем мар, пачах урăхла, ютçĕршывсене тытса илекен, тата, нимĕç банкирĕсемпе плутокрачĕсене пуйтарас тесе, ютçĕршывсен юнне ĕмекен империалистсем пулса тăраççĕ. Геринг, нимĕç фашисчĕсен пуçлăхĕ, паллă ĕнтĕ, хăй те чи пысăк банкирсемпе плутократсенчен пĕри, вуншар заводсемпе фабрикăсене эксплоатацилекен çын пулса тăрать. Гитлер, Геббельс, Риббентроп, Гиммлер тата хальхи Германин ытти правителĕсем те нимĕç банкирĕсен сăнчăрти йыттисем пулса тăраççĕ, вĕсем çав банкирсен интересĕсене ытти пур интерессенчен те мала хураççĕ. Нимĕççен çарĕ çав господасен аллинче суккăр оруди, хăйĕн тата ыттисен юнне юхтарса, Германи интересĕсемшĕн мар, нимĕç банкирĕсемпе плутократсене пуйтарас тесе, хăйне тата ыттисене те чăлахлатакан оруди пулса тăрать.

Çапла калать вăрçă опычĕ.

Нимĕç фашисчĕсем—рабочисемпе хресченсен интересĕсене плутократсенчен хӳтĕ-

леме тăрăшакан социалистсем пулса тăраççĕ, тесе калаççĕ. Çакă вăл, паллах, суя. Фабрикăсемпе заводсенче чуралла ĕç туса хунă тата Германипе вăл пăхăнтарнă çĕршывсенчи ялсенче çĕнĕрен крепостнойла йĕрке туса хунă нимĕç фашисчĕсем рабочисемпе хресченсене хӳтĕлекенсем пулса тăраççĕ тесе çирĕплетсе калама ултавçăсем кăна пултараççĕ. Нимĕç фашисчĕсем тăвакан чуралла-крепостнойла йĕркесем рабочисемпе хресченсемшĕн мар, нимĕç плутократчĕсемпе банкирĕсемшĕн усăллă пулнине ирсĕр ултавçăсем кăна хирĕçлеме пултараççĕ. Çăннипе илсен, нимĕç фашисчĕсем реакционерсем-крепостниксем пулса тăраççĕ, нимĕçсен çарĕ вара—крепостниксен çарĕ, нимĕç баронĕсене пуйтарас тата помещиксен влаçне çĕнĕрен туса хурас тесе юн юхтаракан çар пулса тăрать.

Çапла калать вăрçă опычĕ.

Нимĕç фашисчĕсем—Европăри культурăна илсе пыракансем, çак культурăна ытти çĕршывсенче сарассишĕн вăрçă тăвакансем пулса тăраççĕ, тесе калаççĕ. Çакă вăл, паллах, суя. Европăра виселицăсем лартса тухнă, мирлĕ халăха çаратакан тата ирĕксĕрлекен, хуласемпе ялсене çунтарса

тата сирпĕнтерсе яракан, Европăри халăхсен культура пуянлăхĕсене аркатакан нимĕç фашисчĕсем Европăри культурăна илсе пыракансем пулма пултараççĕ тесе калама профессиллĕ ултавçăсем кăна пултараççĕ. Чăннипе илсен, нимĕç фашисчĕсем Европăри культурăн тăшманĕсем пулса тăраççĕ, нимĕçсен çарĕ вара—вăтам ĕмĕрти тĕттĕмлĕхĕн çарĕ, нимĕç банкирĕсемпе баронĕсен чуралла „культурине" сарас тесе Европăри культурăна аркатса пыракан çар пулса тăрать.

Çапла калать вăрçă опычĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн тăшманăн сăн-пичĕ, вăрçă опычĕ уçса тата çутатса панă сăн-пичĕ.

Анчах вăрçă опычĕ çак выводсемпех чарăнса тăмасть. Вăрçă опычĕ кунсăр пуçне çакна та кăтартса парать: вăрçă тапхăрĕнче фашистла Германипе унăн çарĕн положенийĕнче те, çавăн пекех пирĕн çĕршывпа Хĕрлĕ Çарăн положенийĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç.

Мĕнле улшăнусем-ха вĕсем?

Чи малтан, çакăн пирки ним иккĕленмелли те çук: çак тапхăр хушшинче фашистла Германипе унăн çарĕ вунă уйăх

каялла пулнинчен вӑйсӑрланса юлчӗҫ. Вӑрҫӑ Германи халӑхне пысӑк хуйхӑ, выҫлӑх кӳчӗ, ҫынсем тӗлӗшӗнчен миллионшар ҫухатусем тутарчӗ, ӑна чухӑнлатса хӑварчӗ. Вӑрҫӑ чарӑнасси курӑнмасть-ха, анчах ҫынсен резервӗсем пӗтсе пыраҫҫӗ, нефть пӗтсе пырать, чӗртавар пӗтсе пырать. Германи пурӗ пӗрех поражени тӳсессине Германи халӑхӗ ытларах та ытларах ӑнланса пырать. Германи халӑхӗшӗн ҫакӑ уҫҫӑнрах та уҫҫӑнрах паллӑ пулса пырать: килсе тухнӑ положенирен ҫӑлӑнса тухмалли пӗртен-пӗр май вӑл — Германие Гитлерӑн — Герингӑн авантюристла ушкӑнӗнчен хӑтарасси пулать.

Гитлерла империализм Европӑн питех те пысӑк территорийӗсене йышӑнса илчӗ, анчах та вӑл Европа халӑхӗсен хирӗҫ тӑрас ирӗкне хуҫаймарӗ. Чуралантарнӑ халӑхсем нимӗҫсен фашистла вӑрӑ-хурахӗсен режимне хирӗҫ туса пыракан кӗрешӳ мӗнпур халӑхсен кӗрешӗвӗ пулса тӑма пуҫлать. Оккупациленӗ ҫӗршывсенче пуринче те ҫар завочӗсенче саботаж тӑвасси, нимӗҫ склачӗсене сирпӗнтерсе ярасси, нимӗҫсен ҫар эшелонӗсене йӑвантарса ярасси, нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене вӗлерес-

си яланхи ĕç пулса тăчĕ. Пĕтĕм Югославине тата нимĕçсем йышăннă совет районĕсене партизанла вăрçă пушарĕ хыпса илнĕ.

Çак обстоятельствăсем пурте Германи тылĕ вăйсăрланасси патне, çапла вара, пĕтĕм фашистла Германи вăйсăрланасси патне те илсе çитерчĕç.

Нимĕç çарне илес пулсан вара, вăл оборонăра хытă тăрать пулсан та, çапах та вăл 10 уйăх каялла пулнинчен чылай вăйсăрланса юлчĕ. Унăн Рейхенау, Браухич, Тодт йышши тата ытти ватă, опытлă генералĕсене е Хĕрлĕ Çар вĕлерсе пĕтернĕ, е нимĕçсен фашистла пуçлăхĕсем хăйсем хăваласа салатнă. Унăн офицерĕсен кадровăй составĕн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкнă, тепĕр пайĕ вара, граждăнла халăха çаратнине тата пусмăрланине пула, пăсăлса кайнă. Унăн рядовой составĕ, вăрçă операцисем пынă вăхăтра хыттăнах вăйсăрланса юлнăскер, сахалтарах та сахалтарах пополнени илсе тăрать.

Иккĕмĕшĕнчен, çакăн пирки ним иккĕленмелли те çук: вăрçăн иртнĕ тапхăрĕ хушшинче пирĕн çĕршыв вăрçă пуçланнă чухнехинчен вăйлăрах пулса тăчĕ. Пирĕн

çĕршыв хăйĕн Правительстви тавра халĕ нихăçанхинчен те ытларах пĕрлешсе, пĕтĕççĕ тăнине, пирĕн çĕршывăн тылĕпе фрончĕ пĕр тĕллев çине çапакан пĕр боевой лагере пĕрлешсе тăнине, тылра ĕçлекен совет çыннисем пирĕн фронта ытларах та ытларах винтовкăсемпе пулеметсем, минометсемпе орудисем, танксемпе самолетсем, апат-çимĕçпе боеприпассем парса тăнине туссен кăна мар, тăшмансен те ирĕксĕрех йышăнма тивет.

Пирĕн тăван çĕршыв ытти çĕршывсемпе çыхăнса тăрассине илес пулсан, çак çыхăнусем вара юлашки вăхăтра нихăçанхинчен те ытла тĕреклenсе, ӳссе кайрĕç. Нимĕç империализмне хирĕç ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пĕрлешрĕç. Вĕсем Совет Союзĕ çине тимлĕн пăхса тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн, чыслăхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăрăн кĕрешни пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхе тĕлĕнтерсе савăнтарать. Ирĕке юратакан пĕтĕм çĕршывсенчи халăхсем Совет Союзĕ çине тĕнчене гитлерла чумаран хăтарса хăварма пултаракан вăй çине пăхнă пек пăхаççĕ. Çак ирĕке юратакан çĕршывсем хушшинче малти вырăна

Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем йышăнса тăраççĕ, вĕсемпе эпир туслă тата союзлă çыхăну тытса тăратпăр, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç вăрçă туса пыма вĕсем пирĕн çĕршыва ытларах та ытларах пулăшу парса тăраççĕ.

Çак обстоятельствăсем пурте пирĕн çĕршыв нумай вăйлăрах пулса тăни çинчен калаççĕ.

Юлашкинчен, çакăн пирки ним иккĕленмелли те çук: иртнĕ тапхăр хушшинче Хĕрлĕ Çар вăрçă пуçланнă чухнехинчен организациллĕрех те вăйлăрах пулса тăчĕ. Нимĕç империалисчĕсем ултавлăн тапăннине пула вăхăтлăха каялла чакнă хыççăн Хĕрлĕ Çар, вăрçă пынă вăхăтра улшăну туса, активлă оборонăран тăшман войскисем çине ăнăçлă наступлени тума тытăннин пурне те паллă фактне ăнсăртран пулнă тесе шутлама юрамасть. Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлăхĕсене пула отечественнăй вăрçă çĕнĕ тапхăра,—совет çĕрĕсене гитлерла ирсĕрсенчен хăтарса ирĕке кăларас тапхăра кĕни вăл — факт пулса тăрать. Чăн та, çак историллĕ задачăна пурнăçа кĕртме Хĕрлĕ Çар хаяр та нумай юрлă

хӗлӗн йывӑр условийӗсенче тытӑнчӗ, анчах ҫапах та вӑл пысӑк ӑнӑҫусем тума пултарчӗ. Вӑрҫӑри ҫапӑҫусенче пуҫарулӑха хӑйӗн аллине илсе, Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла войскисене пысӑк поражени тӳстерчӗ тата вӗсене совет территорийӗн чылай пысӑк пайӗнчен хӗссе кӑларчӗ. Захватчиксем хӗллехи вӑхӑтпа усӑ курса сывлӑш ҫавӑрса илме тата хӑйсен оборона линийӗсене ҫирӗплетме шутласа хунисем путланса ларчӗҫ. Наступлени туса пынӑ май Хӗрлӗ Ҫар тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине нумай пӗтерсе тӑкрӗ, тӑшманӑн техникине сахал мар тытса илчӗ тата унӑн ҫуркуннепе ҫуллахи ҫапӑҫусем валли хатӗрленӗ инҫетри тылри резервӗсене вӑхӑт ҫитиччен расходласа пӗтермелле турӗ.

Ҫаксем пурте ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар организациллӗрех те вӑйлӑрах пулса тӑни ҫинчен, унӑн офицерӗсен кадрӗсем ҫапӑҫусенче пиҫӗхсе ҫитни ҫинчен, унӑн генералӗсем вара опытлӑрах та пултаруллӑрах пулса тӑни ҫинчен калаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн рядовой составӗнче те ҫавӑн пекех улшӑну пулса иртрӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи уйӑхӗ-

сенче пирĕн боецсем тăшман тĕлĕшпе тимсĕр те лăпкă пулни пĕтрĕ. Мирлĕ халăхпа совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тискер ĕçсем, çаратусем туса пыни тата ирĕксĕрлени пирĕн боецсене çав чиртен сыватрĕç. Боецсем хаярланса тата тарăхса çитрĕç. Вĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене чăннипех кураймасăр тăма вĕренсе çитрĕç. Тăшмана пĕтĕм чунтан кураймасăр тăма вĕренсе çитмесĕр, ăна çĕнтерме çуккине вĕсем ăнланса илчĕç.

Нимĕç войскисене çĕнтерме çук тесе сӳпĕлтетнисем текех ĕнтĕ çук, вăрçă пуçланнă вăхăтра вĕсем пулнă тата вĕсен хыçĕнче нимĕçсенчен хăрасси пытанса тăнă. Ростовпа Керчь патĕнче, Мускавпа Калинин патĕнче, Тихвинпа Ленинград патĕнче пулнă чаплă çапăçусем тата ун хыççăн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвалама пуçлани пирĕн боецсене çакна ĕнентерчĕ: нимĕç войскисене çĕнтерме çук тесе сӳпĕлтетни вăл—фашистла пропагандистсем шухăшласа кăларнă юмах пулса тăрать. Вăрçă опычĕ пирĕн боеца çакна ăнлантарса пачĕ: нимĕç офицерĕн хăюлăхĕ питех те иккĕ-

ленмелле япала пулса тăрать, нимĕç офицерĕ хĕçпăшалсăр çынсемпе, тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе тата граждăнла мирлĕ халăхпа тĕл пулсан кăна хăйĕн хăюлăхне кăтартать, анчах вăл Хĕрлĕ Çарăн организациленнĕ вăйĕпе хирĕç пулсанах, унăн хăюлăхĕ пĕтсе ларать. Халăх сăмахне аса илер: „Сурăхсене хирĕç пулнă чухне— молодец, молодеца хирĕç пулнă чухне вара—хăй те сурăх".

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă опытĕнчен тумалли выводсем çакăн пек ĕнтĕ.

Мĕн çинчен калаççĕ-ха вĕсем?

Вĕсем çакăн çинчен калаççĕ: нимĕçсен фашистла захватчикĕсене эпир çĕмĕрме пултаратпăр тата вĕсене пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччченех, совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен йăлтах ирĕке кăларса çитеричченех пирĕн малашне те çĕмĕрсе пымалла.

Юлташсем! Эпир отечественнăй, ирĕклĕхлĕ, тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пыратпăр. Пирĕн ютçĕршывсене тытса илес, ют халăхсене пăхăнтарас тĕллевсем çук. Пирĕн тĕллев паллă та чыслă. Эпир хамăрăн совет çĕрне нимĕçсен фашистла мерзавецĕсенчен ирĕке кăларасшăн. Эпир ни-

мĕçсен фашистла мерзавецĕсен мăшкăлĕнчен хамăрăн тăван украинецсене, молдавансене, белоруссене, литовецсене, латышсене, эстонецсене, карелсене ирĕке кăларасшăн. Çав тĕллеве пурнăçа кĕртмешкĕн нимĕçсен фашистла çарне аркатса тăкмалла тата нимĕç оккупанчĕсене, вĕсем тыткăна парăнмаççĕ пулсан, юлашки çын юлмичченех пĕтерсе тăкмалла. Урăх çулсем çук.

Эпир çакна тума пултаратпăр тата ăна пирĕн мĕнле пулсан та тумаллах.

Çав пархатарлă тĕллеве пурнăçа кĕртме пирĕн Хĕрлĕ Çарăн мĕн кирли пурте пур. Тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пирĕн пĕр япала кăна—тăван çĕршыв Хĕрлĕ Çара парса тăракан паха техникăпа туллин усă курма пĕлни кăна çитмест. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çарăн, унăн боецĕсен, унăн пулеметчикĕсен, унăн артиллерисчĕсен, унăн минометчикĕсен, унăн танкисчĕсен, унăн летчикĕсемпе кавалерисчĕсен задачи—вăрçă ĕçне вĕренесси, çине тăрса вĕренесси, харпăрхăйĕн хĕçпăшалне тĕплĕн вĕренсе çитесси, хăйĕн ĕçĕн мастерĕсем пулса тăрасси, çавна тунипе вара, тăшмана шанчăклăн çапма вĕренсе çитесси пулса тăрать.

Тăшмана çĕнтермелли искусствăна çапла майпа çеç вĕренсе çитме пулать.

Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!

Сире Майăн 1-мĕш ячĕпе саламласа тата сывлăх сунса, çакăн пек приказ паратăп:

1. Рядовой боецсен—винтовкăна тĕплĕн вĕренсе çитмелле, харпăрхăй хĕçпăшалĕн мастерĕсем пулмалла, тăшмана пирĕн мухтавлă снайперсем, нимĕç оккупанчĕсене пĕтерекен истребительсем пек тĕл персе çĕмĕрсе пыма вĕренсе çитмелле!

2. Пулеметчиксен, артиллеристсен, минометчиксен, танкистсен, летчиксен—харпăрхăй хĕçпăшалне тĕплĕн вĕренсе çитмелле, харпăрхăй ĕçĕн мастерĕсем пулмалла, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччен ĕнех тӳрех çапса çĕмĕрсе пымалла!

3. Пĕтĕм войскăсен командирĕсен—тĕрлĕ войскăсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрса çапăçас ĕçе тĕплĕн вĕренсе çитмелле, войскăсене ертсе пырас ĕçĕн мастерĕсем пулмалла, Хĕрлĕ Çар хăйĕн ирĕке кăларас

аслӑ миссине пурнӑҫа кĕртме пултарнине пĕтĕм тĕнчене кӑтартса памалла!

4. Пĕтĕм Хĕрлĕ Ҫарӑн—1942 ҫула нимĕҫсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тӑкмалли тата совет ҫĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кӑлармалли ҫулталăк туса хумалла!

5. Партизансемпе партизанкӑсен — нимĕҫ захватчикĕсен тылĕнче партизанла вӑрҫа вӑйлатмалла, тӑшманӑн ҫыхӑну тата транспорт хатĕрĕсене ҫĕмĕрсе пымалла, тӑшманӑн штабĕсемпе техникине пĕтерсе пымалла, пирĕн тӑван ҫĕршыва пусмӑрлакансене хирĕҫ кĕрешес ĕҫре патронсене шеллемелле мар!

Аслӑ Ленинӑн никам ҫĕнтерейми ялавĕпе—ҫĕнтерӳ патне малалла!

**Оборона Халӑх Комиссарĕ**

**И. СТАЛИН**

[...]СКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

10
О.Т.К.

И. СТАЛИН

# ПРИКАЗ

Народного Комиссара Обороны

1 мая 1942 г., Москва

№ 130

На чувашском языке

*Госиздат Чуваш. АССР*

*Чебоксары — 1942*